# ÇĂЛТĂРСЕМ ПАТНЕ ÇУЛ

**/Пуçл. малтанхи номете/**

Тепĕр вăхăтран туссене темĕнле замока илсе килчĕç. Арабелт вĕсене патша тĕрмине илсе килнине ăнланчĕ:

— Эсир мана итлĕр-ха, эпĕ патша ывăлĕ — Арабелт, кусем ман туссем — Коля, Ваня тата Магретта. Кушак Валаси планетинчен. Ăна пулăшу патне янă.

— Атя-ха патша патне. Вăл эпĕ кам иккенне калĕ: Арабелт-и, Оралган шпионĕ-и?

Тĕкĕрçĕ Арабелта патша патне илсе кайрĕ. Кушакпа ачасем урамра юлчĕç.

Тепĕр вăхăтран Арабелт виçĕ салтакпа чупса тухрĕç:

— Туссем, хăвăртрах каймалла. Ан хăрăр, ку пире пулăшакансем. Валаси çине Рабаллак салтакĕсем тапăннă, унсăр пуçне вĕсене Оралган пулăшма сăмах панă. Каярахпа ман атте сирĕн планетăна çăлма арми ярĕ.

Туссем хăвăртрах космос карапне кĕрсе кайрĕç.

Тепĕр самантран карап Мерзимин планетинчен аякка-аякка вĕçсе кайрĕ.

— Мĕн пулнă унта, Валаси планетинче? — ыйтрĕ Коля Арабелтран.

— Пирĕн планетăна килсессĕнех сирĕн çинчен хресченсем патшана каласа панă. Ăна Магретта интереслентернĕ. Вăл ăна Оралган шпионĕ тесе шутланă, çавăнпа пире салтаксем ырă мар кĕтсе илчĕç. Ман атте каларĕ: « Арабелт, Валаси планети çине Рабаллакпа Оралган тапăннă, тусусемпе хăвăртрах кайăр, хăвăрпа пĕрле ман виçĕ салтака илсе кайăр. Вĕсем сире кирлĕ пулĕç. Эпĕ, хамăрăн салтак çарĕпе, каярахпа килĕп».

— Пăхăр-ха çавăнта, мĕн унта?— тĕлĕнсе ыйтрĕ Ванюк.

— Ĕлкĕреймерĕмĕр эпир, — хуйхăрса каларĕ Магретта— ман планетăна пĕтĕмпех аркатса пĕтерĕç.

Карапри чӳречерен хăрушă ӳкерчĕк курăнать. Валаси планетине Оралганпа Рабаллак космос карапĕсем пыл хурчĕсем евĕр сырса илнĕ.

Сасартăк юлташсен карапĕ хытă чĕтренсе илчĕ. Карап çунма пуçларĕ...

/ вĕçĕ çитес номерте/

## ТАПХĂРСЕН ИЛЕМĔ



Хальхи тĕнче пĕрпеклĕхрен тата йăлана кĕнĕ тумтирпе макияжран ывăнса çитрĕ. Майĕпен модăна хăйне евĕрлĕх кĕрсе пырать. Халĕ нумайăшĕ дизайнер хатĕрленĕ ятарлă тум-тире пăхăнса çӳреме тăрăшать. Хальхи стилистсем, визажистсем тата маникюр ăстисем илемлĕх салонĕсенче уйрăм çын сăн-питне шута илсе çитменлĕхсене пытарма, илемне палăртма тăрăшаççĕ.

Чылай илем ăсти çынсен сăн-питне çулталăк вăхăчĕпе танлаштарса пайлаççĕ. Çакна шута илсен ку е вăл çынна мĕнле çӳç тĕсĕ, е писев, е куç харшине сăрламалли тени, е чĕрне лакĕ килешӳллине çăмăллăнах палăртма пулать. Калăпăр, «хĕлле» вăхăта килĕшӳллĕ çыннăн шупка ӳт, тĕксĕм çӳç тата тĕксĕм куç пулмалла. Вĕсене сивĕ тĕссем ытларах килĕшеççĕ: сарă тата хура.

«Çуркунне» вара çутă е кăшт кĕренрех ӳтлĕ, çутă çӳçлĕ. Вĕсене ăшă тĕс питĕ килĕшет. Сарă тата хура тĕссемпе пачах та усă курмалла мар.

«Çулла» кĕре /смуглый/ ӳтлĕ, сивĕрех тĕслĕ йăлтăртатакан тĕксĕм е çутă çӳçлĕ. Вĕсене сивĕ тĕспе ăшшине хутăштарни илĕртӳллĕ тăваççĕ.

«Кĕркунне» ылтăн пек çутă ӳтлĕ, çырă е хĕрлĕ çӳçлĕ. Кун йышши Чиперуксене ылтăн е кĕрен тĕссем чуна пырĕç, персик е пыл тĕсĕ пурне те тыткăна илĕ.

**Материала «Волна» парихмахерски ертӳçи Роза тивĕçтернĕ.**

## ЛĔПĔШ

Пĕтĕм çут çанталăк чĕрĕлнĕ чух хăвăн та улшăнас килет. Çĕнĕ прическа е маникюр сана хăвна та хĕл ыйхинчен хăвăртрах вăранма пулăшать. Чĕрне çинчи çап-çутă хĕрлĕ чечексем тата ытармалла мар хитре пĕчĕк хурт-кăпшанкăсем çуркуннехи кăмăла тата ытларах хăпартаççĕ.

ЛĔПĔШ

Сире ик-виçĕ тĕслĕ лак тата çинçе кисточка кирлĕ пулать. Эсир лĕпĕшсене е француз маникюрĕ çине, е пĕр тĕспе сăрланă чĕрне çине ӳкерме пултаратăр.

1. Чĕрне варрине пĕр пĕчĕк йăрăм ӳкерĕр, вăл лĕпĕшĕн тĕп кĕлетки пулĕ.

2. Унтан хăвăра килĕшнĕ май çунатсен ĕлкине /контурне/ ӳкерсе тухăр. Хыççăн тĕкне ӳкерĕр те типессе кĕтĕр.

3. Лĕпĕш çуначĕсене тепĕр хут урăх тĕслĕ лакпа сăрласа тухăр. Типсен лĕпĕш çуначĕсене тĕрлĕ тĕспе илемлетме пултаратăр.

4. Юлашкинчен тĕссĕр лакпа сăрлама ан манăр.

Лĕпĕш вырăнне уяр та, йĕп вăррине те ӳкерме пултаратăр. Вĕсен вĕçев çул-йĕрне пĕчĕк пăнчăсемпе палăртсан илемлĕрех пулĕ. Çуллахи хурт-кăпшанкăсемпе юнашар чĕрне çинче чечек пулсан тата аванрах.

**Оля Аксяндарова хатĕрленĕ**

### СЫВĂ ПУЛТĂРЧЧĔ ВĂРМАН!

Вырсарни кун ир-ирех
Йĕлтĕр сырса тухрăм эп.
Унтан кайрăм вăрмана
Куртăм хитре пакшана.

Хĕл сивви те темех мар,
Уçăлмашкăн чух кăна.
Шур кĕпеллĕ хурăнсем
Пуç таяççĕ пек мана.

Куртăм ватă юмана,
Сывлăх сунтăм пуç тайса.
Кайăксем валли апат
Хурса патăм сырăша.

Килĕр, çийĕр, кайăксем,
Тутă пулăр-ха ялан!
Каш кашлаччăр йывăççем,
Сывă пултăрччĕ вăрман!

**Александр СТЕПАНОВ, 5 класс, Шурча шкулĕ**




Тĕрлĕ строительство материалĕсем сутатпăр, пурасем касатпăр, мунча кăмакисем хатĕрлетпĕр.

Тел. 89030632489

Адрес: Муркаш районĕ, Калайкасси ялĕ